*Ăсан Уçăпĕ. Ячĕ-сумĕ чыслă, ĕçĕ – пархатарлă / Ăсан Уçăпĕ // Ялав. – 2000. – № 9. – С. 93-96.*

***Ăсан Уçăпĕ***

## Ячĕ-сумĕ чыслă, ĕçĕ – пархатарлă

Эпир, 40-мĕш çулсенче çуралнисем, Семен Элкерĕн «Хĕн-хур айĕнче», «Шурăм пуç килсен», Петĕр Хусанкайăн «Аптраман тавраш», Якку Ухсайăн «Кĕлпук мучи», «Çул», Александр Кăлканăн «Анисса», Василий Краснов-Аслин «Вутра», Степан Асланăн «Ахрат», Александр Артемьевăн «Салампи», Никифор Мранькан «Ĕмĕр сакки сарлака», Куçма Чулкаçăн «Лапшу Çтаппанĕ», «Сунарçă халапĕсем», Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр», Хветĕр Уярăн «Таната», Стихван Шавлин «Киев пионерĕ», Алексей Талвирăн «Пăва çулĕ çинче», Леонид Агаковăн «Пĕрре, çуркунне...» произведенийĕсене вуласа çитĕннĕ, вĕсем урлă çĕршыв, тĕнче аталанăвĕн çул-йĕрне илнĕ, чăваш чунне ăнланнă. Чăвашăн йăмраллă ялĕсенчи ачисем Куçма Турханăн «Йăмраллă ял» (1951) романне те аларан ямасăр вуланă. Унта автор чăваш халăхĕн, унпа пĕрлех пирĕнпе тăванла халăхсен 1941-1945 çулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи тылри паттăрлăхне сăнланă. Ку вăл — чăваш литературинче çак темăпа çырнă чи пысăк произведенисенчен пĕри. Çыравçă унта ял ĕçченĕсем вăрçă çулĕсенче Хĕрлĕ çара ырми-канми пулăшса тăни, мĕн пуррине — тĕпренчĕк çăкăра фронтрисемпе пайлани çинчен каласа панă. «Çĕр суранĕ» («Тăван Атăл» 1962-1963) романпа «Кĕтне хĕрринче» (1954) повеçре те писатель ял çыннисен тата шкул ачисен пурнăçне тарăннăн сăнланă.

Ял пурнăçĕ чун-чĕрене çывăх пулни Куçма Турхана литературăра чăваш аваллăхĕн темине çĕклеме чăрмантарман. Çакă вăл писатель халăх историйĕпе интересленнине, унăн анлă тавракурăм, витĕмлĕ сăнлăхсем асăрхама пултаракан çивĕч куç пуррине, ăшă лиризмпа тарăн психологизм, сулмаклă драматизмлă сценăсем тума пĕлни, самана утăмĕпе пĕр кĕвĕллĕ шалти ритм пулнине ĕнентерет. Литераторсемпе историксем «Сĕве Атăла юхса кĕрет» (1960, 1967, 1976) романа хапăлласа йышăнчĕç. Вăл кашни вулаканшăн вĕрентуллĕ, ырă тĕшĕллĕ произведени. Асăннă романра XVI ĕмĕр варринче, 1546-1552 çулсенче, чăваш халăхĕ мĕншĕн Хусан ханлăхĕнчен уйрăлса вырăс патшалăхне кĕнине тарăннăн çутатнă, ăна истори чăнлăхĕпе никĕсленĕ.

Хусан ханлăхĕн пуçлăхĕсем чăвашсемпе Атăл тăрăхĕнчи ытти халăхсене хытă пусмарланă, кўрентернĕ, йытă вырăнĕнче тытнă. Хансем хăвăрт улшăнса пыма пуçласан йĕркелĕх тата çухалнă, çеçен хири нухайсем чăваш ялĕсене тустарса-çунтарса çўренĕ. Çак йывăрлăхра чăвашсемпе

çармăссем, ирçе-мăкша тата ытти вак халăхсем Вырăс патшалăхĕнче хӳтлĕх шыранă. Çавăнпа вĕсем 1551-1552 çулсенчи вăрçăра вырăс çарне Хусана илме пулăшнă. Паллах, Мускав патшалăхĕ те вĕсемшĕн пыл та çу пулман, çапах та кунта хӳтлĕхпе йĕрке ытларах пулнă.

XVI-мĕш ĕмĕрти чăваш хресченĕсен йывăр шăпине писатель Иштерекпе Пинеç инке кил-йышĕ, вĕсен ачисен — ывăлĕ Ахтупай, хĕрĕ Альпи, Ахтупайăн савниййĕ Эрнепи пурнăçĕ урлă кăтартнă. Ял пуçлăхĕн куштан Урасметăн, Тукай ĕмпӳн, Сахиб Гирейпе Сафа Гирей хансен, Булат Ширин тутарăн сăнарĕсем уçăмлă, витĕмлĕ, ĕнентерӳллĕ пулса тухнă.

«Сĕве Атăла юхса кĕрет» романта икçĕр вăтăра яхăн персонаж. Вĕсенчен çурри ытла историре паллă ят хăварнă çынсем. Çакăн пек йышлă геройсен кун-çулне тĕпчесе пĕлме, вĕсен социалла-историлле ĕçĕсене тĕрĕс хак пама тата асра хăвармалăх сăнлăх хăвачĕ тупма чăн-чăн автора художник чунĕ, çивĕч ăсĕ, пысăк тавçăрупа чăтăмлăх кирлĕ пулнă.

Историлле роман-эпопейăри сăнарсем типлă пулса тухчăр тесе Куçма Турхан хăй çырса кăтартнă тапхăра чи малтан наука мĕнле çутатса панипе, истори докуменчĕсемпе, «Хусан историйĕ» текен асаилӳ кĕнекипе, специалистсен ĕçĕсемпе тĕплĕн паллашнă. Кунпа пĕрлех чăваш халăх сăмахлăхĕнче çав самана, çав тапхăр мĕнле ӳкерĕнсе юлнине анлăн тишкернĕ. Вырăс, тутар тата ытти наци çыравçисен илемлĕ хайлавĕсене нумай вуланă. Виçĕ кĕнекерен тăракан «Сĕве Атăла юхса кĕрет» роман чăваш литературин ылтăн фондĕнче вырăн тупрĕ. Анчах питĕ шел, аслă писатель творчествине шкул программинче çителĕклĕ таран тĕпчесе вĕренейместпĕр-ха эпир халлĕхе […]

Куçма Сергеевич Турхан (Сергеев) Чăваш Енри Комсомольски районĕнчи Вăрманĕрри Чурачăкра чухăн хресчен кил-йышĕнче çуралнă. Ялти пуçламăш шкултан вĕренсе тухнă хыççăн, шăпа пӳрнипе, Сĕнтĕрвăрринчи ача çуртĕнче ӳснĕ.

Ăсĕ-тăнĕ лайăх аталаннă çамрăк, пурнăçĕ çăмăл килмен пулсан та, пĕлĕвне малалла ӳстерме ăнтăлнă. Вăл 1931-1934 çулсенче Канашри Н. Добролюбов ячĕллĕ педагогика техникумĕнче вĕреннĕ, çав вăхăтра «Пионер сасси» тата «Çамрăк хресчен» хаçатсен активлă корреспонденчĕ пулнă. Техникума чи лайăх паллăсемпе пĕтернĕ хыççăн Аслă Чурачăкри тулли мар вăтам шкулта ĕçленĕ, Ленинградри журналистсем хатĕрлекен В. В. Воровский ячĕллĕ института кĕтретлĕ вĕренме кĕнĕ. 1935 çул вĕçĕнче Куçма Сергеевича ЧАССР Совнаркомĕ çумĕнчи Радиоинформаци комитетне ĕçлеме чĕнсе илнĕ, çара кайиччен унта вăл редакторта тăрăшнă. Кĕреш юман пек яш каччăна тепĕр икĕ çултан салтака илнĕ. Хĕсметре вăл виçĕ çул тăнă, Хĕвеланăç Украинăпа Хĕвеланăç Белоруссие ирĕке кăларнă çĕре хутшăннă, 1940 çулта

хĕлле шурă финсене хирĕç çапăçнă, Хĕрлĕ Çар воинĕсен хăюлăхĕпе паттăрлăхĕ çинчен очерксемпе калавсем чылай хайланă.

Çартан таврăнсан Турхан кĕске вăхăт Чăваш кĕнеке издательствин редакторĕ пулнă. 1941 çул пуçламăшĕнче ăна Радиоинформаци комитечĕн тĕп редакторĕ пулма куçарнă. Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Главлитăн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ пулнă. Вăрçă хыççăн, 1949 çулччен каллех — Радиоинформаци комитечĕн тĕп редакторĕ. Çак çултан тытăнса вара вăл литература ĕçĕпе пурăннă.

Куçма Турханăн çӳлерех асăннă кĕнекисемсĕр пуçне тата «Атакăра» (калавсемпе очерксем, 1941), «Пулеметчик Иван Смирнов» (очерк, 1942), «Çĕпĕрти тĕлпулусем» (1961), «Свияга впадает в Волгу» (1985) пичетленнĕ.

Писатель куçару ĕçĕнче те пуçарулăх кăтартнă. Вăл Н. Гоголĕн «Тарас Бульба», С. Григорьевăн «Двенадцатый год» повеçĕсене тата К. Симоновăн «Русские люди» пьесине чăвашла куçарнă.

Чăваш литературине аталантарас енĕпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн Куçма Турхана «Хисеп Палли» орденпа, медальсемпе, тăвата хутчен ЧАССР Аслă Канаш Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăланă. Вăл Чăваш Республикин К. В. Иванов ячĕллĕ премине илме те тивĕçлĕ пулнă.

Пысăк писателĕн, чĕлхе ăстин, чăваш аваллăхне нумай çул хушши тĕплĕн тĕпчесе чунĕ-чĕри витĕр кăларнă ăсчахăн ĕçĕ калама çук пархатарлă, ячĕ- сумĕ чыслă […]